*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

10 (2422) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
нарăс, 12

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Çулталăка пĕтĕмлетсе

## Халăх йышĕ ӳстĕр



**Етĕрне районĕнче** Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев чи малтан Чăвашпотребсоюзăн аш-какай комбинатĕнче пулнă. Пĕлтĕр кунта ашран юр-вар хатĕрлекен çĕнĕ цех хута кайнă. Талăкне 3 тонна продукци хатĕрлеме май парать вăл. Çичĕ ютран турттарса килнĕ аш-какайпа мар, хамăрăннипе усă курни савăнтарать.

Халăха экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци кирлĕ. Çакна кура предприятин тулли хăватпа ĕçлемеллине, пахалăхсăр тавар туса кăларакансене хĕссе кăларса суту-илӳ анлăшĕнче çĕнĕ çулсем уçмаллине палăртнă республика ертӳçи.

Етĕрнесен иртнĕ çулхи ĕçне хакласа тăрăшуллисене, пултаруллисене, çемье йышне ӳстернисене тата Сочири хĕллехи Олимп вăййисене кайма тивĕçлисене наградăсем панă.

Районта демографи лару-тăрăвĕ тивĕçтерсех кайманнине палăртнă. "Ялсенче хăтлă пурăнма, пурнăçа аталантарма, сывлăха упрама майсем туса параççĕ, анчах халăх йышĕ чакать. Апла вырăнти влаçăн халăхра сывă пурнăç йĕркине çирĕплетессипе ытларах ĕçлемелле", – тенĕ Михаил Игнатьев.

Етĕрнесем хăйсене пăшăрхантаракан ыйтусене çĕкленĕ: çул-йĕр тумалли – юсамаллине, уйрăм ялсенче шыв объекчĕсем юхăннине, медицина пулăшăвĕн пахалăхĕ тивĕçтерменнине, вырăнти спирт завочĕн шăпи канăçсăрлантарнине тата ыттине.

## Саккуна пăхăнакан чăрмав ан куртăр

**Шупашкар районĕнче** пĕлтĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçа кĕртнĕ. "Юрма" агрохолдингăн чăх-чĕп комплексне, "Ольдеевская" агрофирмăн теплицине тĕпрен юсанă, "Ниссан" дилер центрне, "Акашевская" чăх-чĕп фабрикине туса пĕтернĕ. "Изва" тулли мар яваплă пĕрлешӳре çĕнĕ йышши трансформатор станцийĕ кăларакан цеха хута янă. Асăннă проектсене пурнăçа кĕртни халăха 245 хушма ĕç вырăнĕпе тивĕçтернĕ. Кăçал та 21 проектпа ĕçлеме палăртнă.

Пĕчĕк тата вăтам бизнесра районти халăхăн 41 проценчĕ ĕçлет.

Иртнĕ çул ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансене пĕрчĕллĕ культурăсене пуçтарса илме каякан тăкака саплаштарма район бюджетĕнчен пирвайхи хут субсиди уйăрнă, пĕтĕмпе унăн виçи 5 млн тенкĕпе танлашнă. Ятарлă услови тăрăх – субсиди илекенсен акмалли лаптăка иртнĕ çулхинчен пĕчĕклетмелле мар.

Районăн пĕлтĕрхи ĕç кăтартăвĕсене сӳтсе явма вырăнти халăх хастар хутшăннă: ĕçмелли шыв пахалăхĕ, культура çурчĕсем, ача сачĕсемпе шкулсем тумалли, шанчăкран тухнă управляющи компанисем çинчен, федераци пĕлтерĕшлĕ трасса çинче çул юппи кирли, çĕрпе тухăçлă усă курмалли пирки сăмах хускатнă. "Атлашевский" хуçалăх ертӳçи тĕрĕслев органĕсене отчет пама кăткăссине уçăмлă тĕслĕхпе ĕнентернĕ.

Республика пуçлăхĕ хăйĕн сăмахĕнче налук тӳлесрен пăрăнакан организацисемпе витĕмлĕрех ĕçлемеллине асăннă. "Вĕсенче йĕрке тумалла, саккуна пăхăнса тăрăшакансене сăлтавсăр чăрмантармалла мар", – тенĕ вăл.

Чылай ыйтăва татса панă чухне халăхăн хăйĕн те пуçарулла пулмалла.

Культура çулталăкĕнче чун тасалăхĕ, чыс, çамрăксене тăван çĕршыва юратма вĕрентесси çинчен ытларах калаçмаллине те палăртнă Михаил Васильевич.

**Ирина АНДРЕЕВА.**

# Ир вăранакан тутă пулнă

Укçа пурнăç патши пулса тăчĕ, унсăрăн хресчен малалла утăм тăваймасть, машина-трактор çĕр сухалаймасть, уй-хир карапĕ тырă выраймасть. Ял хуçалăх специалисчĕсем палăртнă тăрăх – кăçал çур аки ирттерме республикăна 1466,2 млн тенкĕ кирлĕ, çав шутра 902,2 млн тенкĕ кредит. Кун пирки Чăваш Республикин агропромышленноç комплексĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлекен правительство комиссийĕпе Ял хуçалăх министерствин коллегийĕн пĕрлехи ларăвĕнче пĕлтернĕ. Унта иртнĕ çулхи ĕç кăтартăвĕсене пĕтĕмлетнĕ, çурхи акана тĕплĕ хатĕрленсе йĕркеллĕ ирттерсе ямалли çинчен калаçнă.

Пĕлтĕрхи кăткăс çанталăка пула хресчен пысăк тухăç илеймен. Çапах хăш-пĕр хуçалăх çĕр ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене виçĕм çулхинчен ытларах пухса илнĕ. Паха вăрлăхпа аксан, удобренипе апатлантарсан, çум курăкĕнчен вăхăтра тасатсан, вырсан тыр-пуллă пулатăнах çав. Иртнĕ çул Сĕнтĕрвăрри (160,6 процент), Шупашкар (123), Çĕрпӳ (121,1), Улатăр (119,8), Етĕрне (118,9), Вăрмар (105,4), Муркаш (101,4) тата Вăрнар (101 процент) районĕсенче тĕш тырă нумайрах илнĕ.

Республикăра сăвăм ӳсни савăнтарать. Пĕлтĕр кашни ĕнерен вăтамран 4515 килограмм сĕт суса илнĕ. Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Пăрачкав, Çĕрпӳ, Çĕмĕрле, Вăрмар, Улатăр, Йĕпреç районĕсен ку енпе хастартарах. Кăтартусене чакарнă муниципалитетсене тухăçлăрах ĕçлеме çывăх вăхăтрах майсем шырама сĕннĕ.

Ларура çавăн пекех хресчен-сене патшалăх çĕнĕлле пулăшни, çĕр çинче çитĕнтерекен культурăсене тата выльăх-чĕрлĕхе страхламалли çинчен каласа ăнлантарнă. Аса илтерер: ял хуçалăх культурисене страхлассипе пирĕн республика малтисен шутĕнче.

Кунсерен çывхаракан çур аки вăрлăх, удобрени, топливо çителĕклĕ хатĕрлесси çинчен хытах шухăшлаттарать. Раççей ял хуçалăх центрĕн республикăри филиалĕ пĕлтернĕ тăрăх – паянхи куна кĕрхи культурăсен 25,7 проценчĕ аван хĕл каçать, 72,2 проценчĕ çырлахтарать. Иртнĕ юн кун тĕлне республикăра пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсен акмалли вăрлăхĕ 46,1 пин тонна шутланнă (планпа пăхнин 96 проценчĕ). Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Канаш, Комсомольски, Муркаш, Шăмăршă, Етĕрне, Елчĕк, Тăвай районĕсенче вăрлăх çителĕклĕ. Тĕрĕсленĕ вăрлăхăн 51 проценчĕ акма юрăхлă. Улатăрсен, Пăрачкавсен, Сĕнтĕрвăррисен тата Куславккасен кондицие ларман вăрлăх хальлĕхе нумай.

Минераллă удобренипе хресченсене яланхиллех республикăн апат-çимĕç фончĕ пулăшма пултарать. Сутлăхра 8300 тонна удобрени пур. Фонд пулăшăвĕпе ытларах кăнтăр районĕсем усă кураççĕ, килĕшӳсем тăваççĕ. Топливăпа та тивĕçтерме пултарать ку предприяти. Çур аки тата вырма ĕçĕсем ирттерме 500 тонна топливо илсе тухма вăл "Дорисс-Нефтепродукт" пĕрлешӳпе килĕшӳ тунă.

Ĕç çире хресченсене банксем те кредитсемпе пулăшма хатĕр. Раççей ял хуçалăх банкĕн Чăваш Енри филиалĕ иртнĕ çул хуçалăхсене пĕтĕмпе 1,5 млрд тенкĕлĕх кредит панă.

**Ирина НИКИТИНА.**

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хиселпĕ вулакансем! «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси-Кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

## Хутсемпе çирĕплетмелле

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр пайĕсемпе усă курма вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен право документчĕсем пулмалла. Муниципалитетсен вĕсене тĕпе хурса ĕçлемелле, анчах пур чухне те апла мар. Çакна Етĕрне район прокуратурин тĕрĕслевĕ кăтартса панă.

Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр пайĕсене чи малтан кам туянма пултарать-ха? Тепĕр çынна ăна мĕншĕн сутма килĕшмен-ши? Çакă тата ытти ыйтăва пăхса тухмалли, татса памалли ĕç йĕркине район администрацийĕнче вырăнти право документчĕсемпе çирĕплетмен.

Тĕрĕслев кăтартăвĕ тăрăх прокуратура çитменлĕхсене пĕтерме ыйтса Етĕрне район администрацийĕн пуçлăхĕ ячĕпе хут çырнă.

**Ирина ПАВЛОВА.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 12.02 | 13.02 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^0$С | 2–4 сехетре | –9 | –8 |
| | 14–16 сехетре | –7 | –2 |
| Юр çăвать | | * | * |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 754 | 755 |

Инçетри ял сасси

# Çăтмахĕ пур, киленекенĕ шутлă

***Хăйсен ĕçĕнче çав тери пултаруллă, ăслă пуçлăхсем пушă вăхăт тупăнсанах çут çанталăкра пулма тăрăшаççĕ, ытларах чухне – пĕччен, вĕсене никамăн та чăрмантармалла мар. Пуçлăхсене çеç-и, пурне те илĕртет тĕнче илемĕ. Малалла ĕçлеме çын çут çанталăкран вăй илсе шухăш-кăмăлне тасатать, пурнăç çине çĕнĕлле пăхать. Тамăкĕ те, çăтмахĕ те таçти леш тĕнчере мар, хамăр пурăнакан çĕр çинчех иккен. Элĕк районĕнчи Антоновка выççăлкки – çăтмах вырăнсенчен пĕри. Вăрман варринче вун икĕ çурт ларать, анчах унта Ивановсен çемйи кăна тавралăх илемĕпе киленсе пурăнать. Эпир кил хуçи хĕрарăмĕпе тĕл пултăмăр.***





**– Галина Владимировна, сирĕн пÿртĕн пĕр енчи чÿречесем вăрманалла пăхаççĕ, тепĕр енчисем кедрсене тĕллеççĕ. Çĕпĕр йывăççĕсем сирĕн пахчăртах ÿсеççĕ-и? Тĕлĕнмелле вырăн...**

– Çулла килĕр. Чăн-чăн илеме ун чухне курăр. Ав, вăрманпа юнашарах, сад пахчи. Хăй вăхăтĕнче вăрман хуçалăхĕ ларттарнă ăна. Улмуççийĕсем халĕ те тĕрлĕ йышши пан улмипе йăтăнаççĕ. Кедрсем чăнахах та пахчара ÿсеççĕ, çимĕçне те параççĕ. Пĕрин пулмасан та теприн майăрлă.

**– Пилĕк çĕр çулах çитеймен пулĕ-ха. Пилĕк ĕмĕр ларакан Çĕпĕр кедрĕ янăрама тытăнать. Сасă кăларсах. Хăйĕнче пуçтарăннă уйăхпа хĕвел вăйне унăн çынсене памалла. Çавăнпа йывăç турачĕсене касса валеçмелле. Çумра туратăн пĕчĕк татăкĕ кăна пултăр – унăн хăвачĕ çурма вилĕ çынна та чĕртсе тăратма пултарать-мĕн. Çавăнпа кăсăкланатăп.**

– Миçе çултине калаймастăп. Пилĕк çĕрех мар. Кедрсем вăрманта та ÿсеççĕ. Чылай çул каялла лартнă вĕсене. Ирĕккĕн ÿсме чăрмантаракан йывăççене нумаях пулмасть касса сайралатрĕç. Малашне лайăхрах аталанмалла ĕнтĕ.

**– Мĕнлерех вăл, вăрман, кулленхи пурнăçра, шиклентермест-и?**

– Мăшăрпа пĕрлешнĕренпе 25 çул çитрĕ. Çавăнтанпа пурăнатăп кунта (кÿршĕ ялтан качча килнĕ). Пысăк тискер чĕр чунсенех курман. Тилĕсемпе мулкачсем çурт умне тухаççĕ. Хир сыснисене асăрхатăп, анчах ашкăнланни пулман. Хуняма каланă тăрăх – пĕр çулхине хир сысни килтипе туслашнă та, вăхăт иртсен çут тĕнчене хура тĕслĕ сысна çурисем килнĕ. Малтан Вырăс Сурăм ялне ĕçе вăрман витĕр сунарçă йĕлтĕрне сырса çÿреттĕм. Кашкăрсем алхасни çинчен калаçатчĕç те – шикленеттĕм. Кайран хăнăхрăм, çул çинче пăшисене тĕл пулаттăм. Вылăх та чиперех усратпăр. Мăйракаллă шултра вылăх сакăр пуç таранах. Çулла каçченех вăрманта тытнă, ютрисем куç хывман, тискер чĕр чун тапăнман. Лăпкă, шăп пирĕн патра.

**– Вылăх усрама тулăх ĕнтĕ.**

– Упăшка вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕрен уттине çителĕклех хатĕрлетпĕр. Халĕ пушă ларакан çуртсем çулла çынсемпе тулаççĕ. Вĕсем пахчари курăка çулаççĕ те



пире параççĕ. Эпир ăна типĕтсе хамăр пата турттаратпăр. Çавăнпа ялти пахчасем таса.

**– Хĕлле кунта хăвăр кăна пурăнатăр-çке. Уявсенче, тен, йышпа та хутшăнас килет...**

– Эпир тунсăхламастпăр, чиперех пурăнатпăр. Елчĕксем, вĕсен йышлă тусĕсем апла тума памаççĕ. Тахçан Елчĕк районĕн çынни пирĕн ялтан хĕр илнĕ. Авланакан каччăн шăллĕ çавăн чухне кунти илеме ытарайман. Май килсен çĕр илсе çурт лартас шухăш тĕвĕленнĕ пуçĕнче. Ĕмĕтне пурнăçларĕ. Канмалли кунсене, уявсене çемйипе, тус-юлташĕпе кунта ирттерет. Тепĕр чухне Шупашкарти паллă юрăçсене те илсе килеççĕ савăнма. Эпир те тухатпăр вĕсене итлеме. Валерий Туркай пирĕн ял çыннисене хисеплесе темиçе сăвă хайланă, хам çинчен те çырнă. Кăçалхи Кăшарни уявĕнче хăйĕн кĕнекине парнелерĕ, унта шăпах çав сăвăсем кĕнĕ.

**– Итлетĕп те сире каллех тĕлĕнетĕп: ял нуши-терчĕ пирки сăмах та тапратмастăр.**

– Пирĕн çурт умне автомашинăпа çитсе тăтăр. Хăвăрах куртăр – çулĕ чипер. 5-6 çул каялла çырмари дамбăна хăпартнă чухне унта ĕçлекенсене хамăр ял патне çитиччен çул тутарттарса юлтăмăр. Тавах вĕсене. Апатне хамах çитертĕм. Килте те автомашина пур, çавăнпа çăмăллăнах çула тухатпăр. Кунсерен яла сĕт пуçтаракан машина кĕрет. Хальхи вăхăтра эпир 30-шар литр сĕт паратпăр. Ĕçе каймалли кун (Г. Иванова Элĕкри Ваттисен çуртĕнче сменăпа ĕçлет – авт.) ялтан сĕт машинипе ларса тухатăп.

Шыв ăсма ялта икĕ çăл пур. Вĕсене тимĕр-бетон ункăсем хурса çирĕплетрĕмĕр. Пĕринчен ĕçме ăсатпăр, тепринчен – вылăх валли. Ялта икĕ пĕве.

Çут çанталăк газĕ те çунать килте. Ăна кĕртнĕренпе ултă çул çитсе пырать. Ун чухне юнашар ялтан газ пăрăхне хамăр укçапа турттартăмăр. Ялта çамрăкраххисем эпир кăна. Пирĕн ачасене ÿстермелле пулнă. Çитĕнчĕç ĕнтĕ. Пĕри институт пĕтерчĕ те ĕçлет. Хĕр аслă вĕренÿ заведенийĕнче пĕлÿ пухать, мăнук парнелерĕ. Кĕçĕн ывăл, повар-кондитера вĕреннĕскер, çар службине Таджикистана лекрĕ. Уншăн нумай пăшăрханнă. Юрать ырă-сывă таврăнчĕ.

**– Юнашарти икĕ хутлă çурта ăна валлиех хăпартнă пулĕ-ха.**

– Ялта юлтăр тетпĕр-çке. Ĕç çук кунта, çав кулянтарать. Манăн мăшăр хăй вăхăтĕнче Печорăри тинĕс училищине пĕтерчĕ. Çав енĕпе ĕçленĕ пулсан ку таранччен, тен, пысăк вырăн йышăнатчĕ. Амăшĕ яла чĕнсе илнĕ те кунтах юлнă. Халĕ ÿкĕнмест ĕнтĕ çапла килсе тухнăшăн.

Чăн та, илĕртÿллĕ пирĕн тавралăх, сывлăшĕ сиплĕ. Канмалли, сывлăха çирĕплетмелли вырăн йĕркелесен ĕçĕ те пулĕччĕ. Укçаллă çынсене кам илĕртĕ-ши?..

**Ирина НИКИТИНА.**

ШУТ-ХИСЕП

# Пурнăç хаклансах пырать

2014 çулхи кăрлач уйăхĕнче таварсен тата пулăшу ĕçĕсен потребитель хакĕсен (тарифĕсен) индексĕ пĕлтĕрхи раштав уйăхĕнчин 100,8 процентне çитнĕ, 2013 çулхи кăрлачпа танлаштарсан – 106,1 процент.

Апат-çимĕç таварĕсем уйăхра 1,4 процент хакланнă. Пахча çимĕç продукцийĕ (çĕр улми – 7 процент), сăра-эрех, пулă 3,4 процент ÿснĕ. Çавăн пекех сĕт юр-варĕн, улма-çырла консервин, общество апатланăвĕн, чейпе кофĕн, сырăн, услам тата ытти çăвăн, соусăн, апата техĕм кĕртмелли япалан, концентратăн – 1,4 - 0,1 процент, çăкăр-булкăн хакĕ 0,02 процент хăпарнă. Çăмарта – 13,9 процент, варени, джем, пыл, çăнăх, пылак пăр, макарон-кĕрпе, аш-пăш, сахăр, кондитер изделийĕсем, пылак шыв – 1,8-0,1 процент, пахча çимĕç консерви 0,03 процент йÿнелнĕ.

Апат-çимĕçĕн чи пĕчĕк пуххин пĕр çын пуçне тивекен уйăхри хакĕ 2014 çулхи кăрлач вĕçĕнче 2552,32 тенкĕ пулнă е малтанхи уйăхран 2,8 процент хăпарнă.

Апат-çимĕç шутне кĕмен таварсем уйăхра 0,4 процент ÿснĕ. Пусма-тавар – 2,1 процент, мамăк-тир, трикотаж, фарфорпа фаянс савăт-сапа, строительство материалĕ, сад хатĕрĕсем, галантерея таварĕ, тумтирпе аялтан тăхăнмалли кĕпе-йĕм, парфюмерипе косметика, пичет кăларăмĕ, çăмăл машина, сăран атă-пушмак, тĕртнĕ тата хутăштарнă пир-авăр 1,4-0,5 процент хакланнă, çавăн пекех тимĕр савăт-сапа, çумалли тата тасатмалли хатĕр, сĕтел-пукан, сехет, шкул тата çыру, канцеляри хатĕрĕ, чăлха-нуски, телерадиотавар, тетте, ал шăлли, табак, электротавар тата йăла техники – 0,4-0,1, компьютер 0,01 процент ÿснĕ. Çыхăну хатĕрĕ, топливо, медицина таварĕ, шăрпăк 0,9-0,1 процент йÿнелнĕ.

Пĕр уйăхра пулăшу ĕçĕсем 0,7 процент хакланнă. Вĕсем вĕренÿре, физкультурăпа спортра – 6,4, медицинăра, йăлара, çыхăнура, посредник ĕçĕнче, санатори-курорт тытăмĕнче 0,7-0,1 процент ÿснĕ. Пассажир транспортĕнче, туризмра, культурăра 1,6-0,9, страхлавра, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра 0,03 процент чакнă.

**2014 çулхи кăрлач уйăхĕнчи хаксем**

(малтанхи уйăхрипе танлаштарсан, процентпа)



# Палтай



Етĕрне районĕнчи Палтай – Сăр тăрăхĕнчи чи ватă чăваш ялĕсенчен пĕри. Ăна 1468 çулта Сăкăт юхан шывĕ хĕрринчи Сăкăт ялĕнчен (каярах Шупашкар хулипе пĕрлешнĕ) куçса килнĕ чăвашсем никĕсленĕ. Кунта 1790 çулта чиркӳ, 1860 çулта шкул уçнă. 1713-1720 çулсенче ялта Етĕрне купсин И.Е.Засыпкинăн эрех завочĕ ĕçленĕ. Раççейри 1795 çулхи çырав кăтартăвĕ тăрăх – Палтайпа унăн выççăлкисенчи 321 хуçалăхра 536 арçынпа 616 хĕрарăм пурăннă. Совет тапхăрĕнче вăтам шкул, çыхăну уйрăмĕ, ялпо, ветеринари участокĕ, фельдшерпа акушер пункчĕ, библиотека, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерской, лавкка уçăлнă.

Палтайсем вĕренӳре, культурăпа искусствăра, литературăра палăрнă. Вĕсем: истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ Д.Д. Шуверов, медицина ăслăлăхĕсен кандидачĕ Г.Ф. Рыбаков писатель, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ Т.Т. Моисеев, Олег Кăйкăр юрăç-композитор, физикăпа хими ăслăлăхĕсен кандидачĕ В.В. Михайлов, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ И.С. Клочков фотоӳнерçĕ, Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕ Б.Б. Чиндыков писатель, Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Е.Б. Матвеева, ЧР социаллă хӳтлĕх тытăмĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Н.Я. Николаева, ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ Р.И. Шуверова, О.Е. Охтерова музыкçă, В.В. Охтеров çыравçă тата ыт. те.

Халĕ Палтайсем хресчен ĕçĕпе пурăнаççĕ, район центрĕнчи тĕрлĕ предприятире, учреждениcемпе организацисенче, ял хуçалăхĕнче тăрăшаççĕ.


Владимир атте çемйипе


Шкул директорĕ Галина Ярославцева


Çамрăк спортсменсем

Сергей Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсем


Зинаидăпа Юрий Медведевсем


Шкул телекуравĕн хастарĕсем


Ольга Муравьева пенсионер

## ХЫПАР-ХĂНАР

### Патшалăх пулăшăвĕпе

Ял çыннишĕн выльăх-чĕрлĕх сывă пулни паха. Анчах та ветеринарсем çитменни чăрмав кӳрет. Комсомольски районĕнчи Сергей Катиков ку енĕпе хаклă специалист. Вăл выльăхсене сиплемелли пункт уçасшăн. Шухăшне ĕçе кĕртме грант илни пулăшнă.

Ял-йыш çамрăка лайăх пĕлет, ырăпа асăнать. Вăл ытларах ялсем тăрăх çӳрет. Çавăнпа унăн пушă вăхăт çукпа пĕрех.

Грант укçипе Сергей выльăха искусствăлла майпа пĕтĕлентермелли хатĕр туяннă. Халĕ вăл таврари ялсенче те кĕтнĕ хăна. Хуçалăх фермисенче çеç мар, уйрăм çынсем патĕнче те пулать, выльăхчĕрлĕхе сиплет. Ĕне пăрулаймасан е йывăр аптрасан ял халăхĕ тӳрех ун патне пырать. Инкеке лекнĕ выльăха çамрăк пулăшмаваскать.

Сергей ашшĕ-амăшĕн çулне суйласа илнĕ темелле. Ашшĕ агроном пулнă, амăшĕ ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ. Вĕсем картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усранă. Çавăнпа вăл кĕçĕн тусĕсене ачаранах юратнă. Професси суйласси те кăткăс пулман. Вăтам шкул хыççăн ветеринара вĕренме кайнă. Каярахпа асăннă районти «Восток» хуçалăхра зоотехникра, ветеринари фельдшерĕнче ĕçленĕ.

### Ĕç саккунне пăхăнманшăн

Йĕпреç районĕн прокуратури «Стандарт» тулли мар яваплă пĕрлешӳ ĕç саккунне пăснине палăртнă. Ертӳçĕ çынсене шалу вăхăтра паман, вĕсемпе аттестаци ирттермен, ĕç килĕшĕвĕсенче те кăлтăксем пур.

Чăваш Республикинчи патшалăх ĕç инспекцийĕн йышăнăвĕпе пĕрлешĕве 30 пин тенкĕлĕх штрафланă.

**Валентина МАКСИМОВА.**

### Кантăрпа капкăна лекетĕн

Элĕк районĕнчи К. гражданин кантăра мĕншĕн килти теплицăра ӳстерни паллă. Иртнĕ çулла вăл çитĕннĕ кантăртан наркотик наркăмăшĕ хатĕрленĕ те пӳлĕмĕнче пытарнă. Полици ĕçченĕсем шăпах çакăнта тупнă ăна.

23 çулти арçын кантăрпа ун йышши ӳсен-тăран çитĕнтерме юраманнине пĕлмен мар-тăр. Çавăнпах пулĕ айăпне те йышăннă. Суд ăна 160 сехет ĕçлеттерсе юсанмалла тунă.

**Ирина НИКИТИНА.**



**Хăвăртлăх. Хăрушсăрлăх. Хӳтлĕх**

# Урапана хĕлле хатĕрлеççĕ

**Республикăра тракторсемпе çул-йĕр тунă чухне, строительствăра тата ытти çĕрте усă куракан хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен шучĕ çулсерен ӳсет. Пĕлтĕр акă висĕм çулхипе танлаштарсан 394 единица хушăннă, пĕтĕмпе 22 525-е çитнĕ. Чăваш Енри Патшалăх техника надзорĕн ертӳçи Владимир Димитриев çакна ведомствăн иртнĕ çулхи ĕç-хĕлне пĕтĕмлетнĕ май палăртнă.**

Техникăна ытларах ял çынни туянать. Ялта çирĕп тымар ярса çĕр çинче ĕçлесе пурăнма трактор кирлех. Ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсенче техника шучĕ чакнă пулсан, уйрăм çынсен 687 единица чухлĕ ӳснĕ. Промышленноç предприятийĕсенче те хушăм пур. Ял хуçалăхĕнче пĕтĕмĕшле шут чакнине ăнлантарма пулать. Паянхи хресченсем кивĕ техникăран хăпма тăрăшаççĕ, пысăк тухăçлине туянаççĕ. Çĕнни темиçе кивĕ трактора улăштарать.

Патшалăх техника надзорĕн тĕп тивĕçĕ – тракторсен юсавлăхне тĕрĕслесе механизаторсене инкекрен хӳтĕлесси. Çавăнпа инспекторсен уйрăмах ака уйăхĕнче, çур аки умĕн, ĕç нумай. Саккун ыйтнă тăрăх – тĕрĕслеве ĕç çи пуçланиччен 10 кун маларах вĕçлемелле. Темĕн пек хĕтĕртсен те хуçалăхсем техникăна тĕрĕслеве вăхăтра (çирĕплетнĕ графика пăхăнса) тăратаймаççĕ. Халех, хĕллех, хатĕрленме тытăнсан тĕрĕслев чăрмавлă иртмĕ. Техника юсавсăррипе сыхăннă инкек-синкек те пулмĕ. Пĕлтĕр инкекпе вĕсленнĕ 11 тĕслĕх шута илнĕ.

Иртнĕ çул вĕренӳ заведенийĕ пĕтернĕ 1 502 çын машинист-тракторист удостоверенийĕ илнĕ. Çакна кура инспекторсен те, техника хуçисен хăйсен те тимлĕ, асăрханулă пулмалла. Пĕтĕмпе вара патшалăх техника надзорĕн органĕ 3 594 удостоверени панă (е улăштарнă).

Инспекторсен ĕçне тĕрлĕ тапхăрта иртекен профилактика операцийĕсем ("Трактор" йышшисем) аван хаклаççĕ. Тупса палăртнă çитменлĕхсен ытларах пайĕ шăпах çак вăхăта лекет. Шута илнĕ техникăн 63 процентне пĕлтĕр мероприятисем иртнĕ вăхăтра тĕрĕсленĕ, йĕркене пăснă 729 тĕслĕх тупнă. Ертӳçĕсен те, предприяти-организацисен те явап тытма тивнĕ.

Патшалăх техника надзорĕн иртнĕ çулхи ĕçне пĕтĕмлетнĕ çĕре республикăн ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов та хутшăннă. Патшалăх инспекторĕсене хуçалăхсемпе яланхиллех тачă çыхăнса ĕçлеме чĕннĕ, ведомствăн чи пултаруллă ĕçченĕсене наградăсем панă.

# Авари – çамрăксен айăпĕпе




Иртнĕ çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче автошкул пĕтернĕ хĕр алла водитель удостоверенийĕ илнĕ. Унтанпа уйăх та иртмен – чӳкĕн 13-мĕшĕнче вăл инкеке лекнĕ, автомашинипе хыçалалла кайнă чухне транспорт çине пырса кĕнĕ. Çакăн хыççăн икĕ эрнерен машинипе йывăçа пырса çапнă. Хăй те, пĕрле ларса пынă хĕр те йывăр суранланнă. Тантăшĕ нумай пурăнайман, часах пульницăра вилнĕ.

Алла руль тытмалăх пĕлӳ илнĕ-ши ку хĕр шкулта? Çамрăк водительсен тăвакан инкексене тишкерсен çак ыйту тăтăшах тухса тăрать. Çул çинчи аварисен 70 проценчĕшĕн шăпах çамрăксем айăплă. Иртнĕ çул вĕсене (машина рулĕ умне ларнăранпа виçĕ çул та çитменнисене) пула республикăра 22 çын вилнĕ, 458-ăшĕ аманнă. Ку çеç-и? Çамрăксенчен 16-шĕ руле ӳсĕрле тытнипе инкек курнă. Тепĕр виççĕшĕ эрех ĕçнине пытарса медицина учрежденийĕнче тĕрĕсленме килĕшмен.

Хăвăртлăха ытлашши ӳстерни, хирĕç килекен транспорт çулĕ çине тухни, пĕрпĕрне ирттерсе яманни – час-часах тĕл пулакан инкек-синкек сăлтавĕ. Автошкулсенче ку тĕлĕшпе çирĕп ыйтмалла мари-ха вĕренекенсенчен? Çавăнпа патшалăх автоинспекци ĕçченĕсене водительсен хатĕрлекен организацисен вĕрентӳ пахалăхĕ çырлахтармасть. Уйрăмах – практика ĕçĕ, çул çӳреме хăнăхтарни. Инструкторсен ăсталăхĕ те тепĕр чухне иккĕлентерет. Автошкулсен пурлăх бази те чухăн. Автодрома тара илме укçа хĕрхенсе занятисене машинăсем лартмалли хĕсĕк вырăнсенче ирттереççĕ. Çакна кура вĕренсе тухакансен хатĕрленӳ шайĕнчен тĕлĕнме кирлех те мар. Водитель удостоверенийĕ илме ирĕк паракан экзамена пĕлтĕр шкул пĕтерекенсен çурри çеç ăнăçлă тытма пултарнă, ыттисен темиçе хут чупма тивнĕ.

Çаксене шута илсе автошкулсенчи вĕренӳ ĕçне сĕнĕлле йĕркелеме палăртнă. Ку ăна лицензилессипе тата тĕрĕслессипе çыхăннă. Ятарлă шкулсен паян республикăри автоинспекци управленийĕпе килĕшсе хатĕрленĕ вĕренӳ программисем пулмалла, пурлăх бази вĕренĕве тивĕçтернине те инспекцин тĕрĕслемелле. Чăваш Республикин Вĕренӳпе çамрăксен политикин министерствинче тата Çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн патшалăх инспекцийĕн республикăри управленийĕнче ку тĕлĕшпе пĕр чĕлхе тупнă.

Влаç органĕсем Чăваш Енре автошкулсен ассоциацине йĕркелессине те ырланă, пулăшма шантарнă.



## Пурăнмаллаччĕ...

Нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче çул çинчи инкеклĕ аварисен шучĕ палăрмаллах ӳснĕ. Çак кун темиçе çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Кăнтăрла тĕлĕнче "Фольксваген Пассат" водителĕ Красноармейски районĕнчи Кӳлçырма ялĕ çывăхĕнче пынă. Асăрханулăха çухатнипе-ши е урăх сăлтавпа, хирĕç килекен автотранспорт çулĕ çине сиксе тухнă. Инкекрен пăрăнса иртеймен: "ВАЗ-21310" машинăпа çапăннă. 26 çулти водитель тата унпа пĕрле ларса пынă 27-ри çамрăк мĕн пулса иртнине те сиссе ĕлкĕреймен, ĕмĕрлĕхех куç хупнă. Тепĕр автомашинăри упăшкипе (руль умĕнче ларнă) арăмĕ те хытах аманнă. Кăшт вăхăтран водителĕн мăшăрĕ пульницăра тăна кĕреймесĕрех вилнĕ.

Кун каç енне сулăнсан, 18 сехет иртсен, Канаш районĕнчи Асхва ялĕ çывăхĕнче 32 çулти водитель "ВАЗ-21102" машинипе фура çине пырса кĕнĕ. Питĕ вирлĕ çапăннăран çул йĕркине пăснă водитель сывă юлма пултарайман. Суранĕ ыратнине тӳсейменскер вăл çавăнтах пурнăçран уйрăлнă.

Вилсен икĕ аршăн та пĕр шит тенĕ ватăсем. Пире, сыввисене тата çул çинчи инкексенче чĕрĕ юлнисене, хăрушă тĕслĕхсем ăса кĕртĕç-ши?..

# Инкекпе мар, телейпе каçасчĕ

Пирĕн республикăра 119 чукун çул каçмипе усă кураççĕ. Вĕсенчен 79-ăшне Чулхула чукун çул ведомстви ("Раççей чукун çулĕсем" акционерсен обществин филиалĕ) тытса тăрать. Хĕрĕхĕшĕ тĕрлĕ организаципе предприятин шутланаççĕ. Аллă тăватă каçмана йĕркелесе тăмалли хатĕрсемпе тивĕçтернĕ, тăваттăшĕ çинче каçма юраманнине палăртса чăрмавсем е пуйăс иртекен çул сыпăкне хупса каштасем вырнаçтарнă.

Чукун çул урлă каçнă чух инкек-синкекрен хӳтĕленме патшалăх автоинспекци ĕçченĕсем иртнĕ çул 10 профилактика мероприятийĕ ("Чукун çул каçми" ятпа) ирттернĕ, предприятисемпе организацисене çитсе халăхпа тĕл пулнă, асăрхамаллине ăнлантарнă, хаçат-журналта, Интернетри пĕлтерĕшлĕ сайтсенче асăрхаттарнă. Анчах чукун çул каçмисем çинчи инкексен сăлтавне тишкеретĕн те алă усăнать. Автомашина водителĕсем яланхиллех тимсĕр, çăмăлттай, умри хăрушлăха курса тăрсах васкаççĕ. Çапларах пĕтĕмлетӳ тума май панă пĕлтĕрхи кăтартусем. Вĕсене нумаях пулмасть селектор канашлăвĕнче сӳтсе явнă. Унта Тутар, Чăваш, Пушкăрт республикисенчи, Чулхулапа Киров облаçĕсенчи яваплă çынсем хутшăннă.

Айăпа кĕнĕ водительсен шутне маршрут автобусĕсен рулĕ умне ларакансене те кĕртмелле. Пирĕн республикăра кун пек маршрутсем 21 чукун çул каçми урлă иртеççĕ. Пĕлтĕр чукун çул урлă йĕркене пăсса каçнă 1326 тĕслĕхе шута илнĕ, инкек çулне пӳлнĕ.

Лару-тăрăва лайăхлатма каçмасене юсаççĕ, анчах çакă çителĕксĕр. Чукун çул урлă каçнă чухне хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнман водительсен йышĕ çаплипех ӳсет. Вĕсене, çитĕннĕскерсене, малашне те вĕрентмелле, ăнлантармалла, асăрхаттармалла.




## Укçана тавăрма тивĕ

Хăйĕнчен ултă çул аслă арçынна 27 çулти хĕрарăм çăмăллăнах чике тăршшĕ лартма пултарнă. Юмăç ярса чăннине калăп тесе чикан майри Муркаш район çыннин укçине туртса илнĕ. Ăçта каяс мăшкăл тӳснĕ арçыннăн? Юрать Шупашкарти Б. Хмельницкий урамĕнче çул-йĕр инспекцийĕн патруль машинине асăрханă та унта ларакансенчен пулăшу ыйтнă.

Инкекре хăварман ăна инспекторсем. Хĕрарăм ют çын пурлăхне вăрланине туннă, анчах ял çыннин укçине ун çумĕнчех тупнă. Çакнашкал ултавшăн пуçласа çакланман вăл йĕрке хуралçисен аллине. Хальхинче те ăна хирĕç уголовлă ĕç пуçарнă.

Кăларăма Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

# Амăшĕн пехилĕ



«Пурнăç çулне каялла çаврăнса пăхатăп та пур пĕрех лайăххи кăна аса килет. Йывăрлăхсем пачах та пулман тейĕн», – тет Вăрнар районĕнчи Хурапыр-Юнтапа ялĕнче пурăнакан Валентина Яковлева.

Çын ырă кăмăллă пулнине пĕрре курсах тавçăратăн. Валентина Васильевна таса, çирĕп чунлăскер.

«Эпир çитĕннĕ чух самани питĕ тертлĕ пулчĕ, – кăмăллăн калаçать 79 çулти кинемей. – Эпĕ 7 çулта чухне атте вăрçа тухса кайрĕ. Анне тăватă пĕчĕк ачапа тăрса юлчĕ. Мĕн кăна курман-ши вăл? Пире пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарчĕ. Фронта пулăшас тĕллевпе тăрăшса ĕçлеттĕмĕр. Шел, атте 1943 çулта Ленинград облаçĕнчи Дубовка ялĕ патĕнчи çапăçура пуçне хучĕ». Пулни-иртнине аса илмессерен кинемейĕн куççулĕ пăчăртанать.

Сакăр çул тултарсан Кушар-Юнтапари пуçламăш шкула вĕренме кайнă вăл. «Шкул пахчинче ятарласа урпа акса ÿстеретчĕç. Кашни пучаха алăпа пуçтарса, арманта авăртса çăнăх тăватчĕç. Шкул ачисене 200-шер грамм çăкăр паратчĕç. Йывăр пурнăç пире çирĕплетнĕ, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентнĕ», – малаллах сÿтĕлчĕ калаçу çăмхи.

Валентина Васильевнăн ашшĕпе амăшĕ ĕçкĕ-çикĕре юрă пуçарса яраканĕсем пулнă. Хĕр ача вĕсенчен вĕренме тăрăшнă, чылайăшне астуса юлнă. «Суйлав, уяв вăхăчĕсенче концерт, спектакль час-часах кăтартаттăмăр. Куракан пирĕн пултарулăха хаклани савăнтаратчĕ», – тет вăл.

Çемье кил хуçисĕр юлнăран унăн малалла вĕренес ĕмĕчĕ татăлнă. Амăшне хĕрхенсе хĕрĕ ялтах юлнă. Кушар-Юнтапара клуб ертÿçинче ĕçлеме тытăннă, юрăпа ташă ушкăнне ертсе пынă. Юрлама-ташлама ятарласа вĕренмен вăл, чун хушнипе, чĕре ыйтнипе туптаннă пултарулăхĕ. Республикăри смотр-конкурса хутшăнса çамрăксен ушкăнĕ баян çĕнсе илнĕ. Ăна Валентинăн пиччĕшĕ Михаил каланă. Кирек мĕнле çанталăкра та лаша кÿлсе таврари ялсене çÿренĕ вĕсем, халăха юрă-ташăпа савăнтарнă.

1957 çулта Валентина хăйсен ялĕнчи каччăпа Матвейпе пĕрлешнĕ. Мăшăрĕ те тĕрлĕ енлĕ пултаруллă çын пулнă. Вăл чылай çул ял хуçалăхĕнче хуралтă, çурт-йĕр ăсталанă çĕрте ĕçленĕ. Колхоз аталанса пынă май Матвей Яковлевич Нурăсра механизаторсене хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă, тракториста вăй хунă. Çĕр ĕçченне парнесемпе, Тав хучĕсемпе пĕрре мар хавхалантарнă. 1968 çулта туслă мăшăр Мускаври ял хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравне кайма тивĕçнĕ. Çав çулах кил хуçине ВДНХан кĕмĕл медалĕпе чысланă. Каярах вара вăл «ЧАССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» ята илнĕ.

Яковлевсем тăватă ача çуратса ÿстернĕ: виçĕ хĕр те пĕр ывăл. Ун чухне кĕпе-тумтир илме те хĕсĕк пулнă. Çак лару-тăруран тухас тесе çемье çĕвĕ машини туяннă. «Ачаранах кĕпе ĕлкисене хамах касса çĕлеттĕм. Каярахпа шукăль тумсем ăсталама тытăнтăм. Çапла вара ял халăхĕнчен саккассем йышăнма пуçларăм. Вăрнарти йывăç комбиначĕ валли çирĕм çула яхăн ачасемпе пĕрле сеткăсем çыхрăмăр», – сăмах ваклать кинемей.

Ачисене пĕчĕкренех тирпейлĕхе, сăпайлăха вĕрентнĕ Яковлевсем. Вĕсене пурнăç çулĕ çине çирĕппĕн пусма хăнăхтарнă.

«Атте-анне – пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕх. Аттерен – арçын ĕçне, аннерен çĕвĕ вăрттăнлăхне вĕрентĕм, – тет Пушкăртстанри Пелепей хулинче пурăнакан ывăлĕ Владимир. – Шкулта чухнех хам валли виçĕ-тăватă шăлавар çĕленĕччĕ. Тулăра пурăнакан Ирина аппа модельер-çĕвĕçре чылай çул ĕçлерĕ».

Самана лайăхланса пынишĕн савăнать Валентина Васильевна. Шел, мăшăрĕ вăхăтсăр çĕре кĕчĕ, ачисен телейне кураймарĕ. Амăшне май пур таран пулăшаççĕ тĕпренчĕкĕсем. Çу кунĕсенче кил-çурт ача-пăча сассипе кĕрлесе тăрать. Кинемейĕн паян сакăр мăнук тата виçĕ кĕçĕн мăнукĕ пур. Пушă вăхăт тупăнсанах алса-чăлха çыхать вăл.

Ватă çын кашни уяврах Нурăс чиркĕвне çÿрет. Çывăх çыннисемшĕн турăран сывлăх, телей ыйтать. Амăшĕн пилĕ ачисене çитетех.

**Надежда НАЛИМОВА-ЧУДАКОВА.**

# Хваттер кама лекĕ?

**? Эпир упăшкапа тахçанах администрацирен хваттер илнĕ. Ăна ман çине çыртарнă. Упăшка пропискăра çеç тăрать. Эпĕ халĕ унран уйрăлатăп. Вăл каланă тăрăх – хваттерĕн пĕр пайĕ ăна лекет. Свидетельствăра ман ят çеç-çке?**

**Надежда ПЕТРОВА.**

**Ыйтăва Чăваш Республикинчи Росреестр управленийĕн право тĕлĕшĕпе тивĕçтерекен уйрăм пуçлăхĕ Татьяна Захарова хуравлать.**

Саккун тăрăх – мăшăр пурлăхĕ пĕрлехи харпăрлăх шутланать. Кунашкал йĕрке пур. Енчен те мăшăрлану килĕшĕвне çирĕплетмен пулсан. Çемьене хваттере çурт-йĕр условине лайăхлатас тĕллевпе панă пулсан, вăл – пĕрлехи пурлăх. Кун пек чухне харпăрлăха кам çине çырнине шута илмеççĕ. Çакна пĕр тĕслĕхпе çирĕплетме май пур.

Судра хваттер пайлакан мăшăр ыйтăвне пăхса тухрĕç. Кил хуçи Александров хваттерĕн пĕр пайĕ хăйне тивĕçнине çирĕплетрĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем ăна пĕрлешсен илнĕ. Çемье саккунĕпе кун пек чухне пуянлăха пайлама ирĕк пур. Анчах арăмĕ хваттер хăйĕн харпăрлăхĕ пулнине пĕлтерчĕ. Ăна хула администрацийĕ çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе çемье членĕсене шута илмесĕр панă. Çакна регистраци удостоверенийĕпе çирĕплетнĕ.

Ку хваттер муниципалитетăн çурт-йĕр фончĕн шутне кĕнине палăртрĕ суд. Хула администрацийĕ Александровсен çемйине – ун чухне çемье шутне икĕ çын çеç (арăмĕпе упăшки) кĕнĕ – çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас шутпа хваттерпе тивĕçтернĕ. Йышăну хучĕ çинче Александровăна çеç палăртнă, çапах та вăл хваттер хуçи пулнине пĕлтермест. Хирĕçÿлĕ хваттер мăшăрăн пĕрле ĕçлесе илнĕ пуянлăхĕ шутланать, çавна май пĕрлехи харпăрлăх йĕркипе пайланать.

# Çемье ăшши

Элĕк районĕнче ача усрава йышăнакансен шучĕ çулсерен йышланать: 2010 çулта – 26, 2011 çулта – 30, 2012 çулта – 32, 2013 çулта 36 çемье ача-пăчана хăй хÿттине илнĕ. Сăмахран, 2011 çулта – 53, виçĕм çул – 59, пĕлтĕр вара 67 ача ырă çемьере телей тупнă.

Халĕ асăннă районта çакнашкал çемье – 37. Вĕсем 68 ача çитĕнтереççĕ. Пирвайхи усрав çемьесем 2004 çулта йĕркеленнĕ. Чылай ашшĕ-амăшĕ ятарлă курссенчен вĕренсе тухнă.

Якунекасси ялĕнче пурăнакан Зоя Филипповна çемйинче – çула çитмен ултă ача. Малтанах Семенпа Светланăна ача çуртĕнчен илсе килнĕ, ун хыççăн – пĕр тăван Самсоновсене. Каярахпа вара туслă йыша тепĕр Светлана хушăннă. Ачасем çемье ăшшине туйнă. Вĕсем Юнтапа Сурăмри вăтам шкула çÿреççĕ. Самсоновсен аслă хĕрĕ Вера пĕлтĕр И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи медицина факультетне вĕренме кĕнĕ.

Анаткас Сурăмри Ираида Павлова виçĕ хĕре (Анна, Александра тата Анюта) телей парнелеме пултарнă. Вĕсем те Юнтапа Сурăм шкулĕнче ăс пухаççĕ. Маттур хĕрсем районти, республикăри мероприятисене яланах хутшăнаççĕ. 2013 çулта çемйипех Словенире каннă.

Тури Вылă ялĕнчи Зоя Степанова усрава илнĕ виçĕ хĕрĕпе – Ксюша, Наташа тата Даша – çав тери кăмăллă. 2013 çулта çак çемье республикăри «Çулталăк çемйи» конкурса хутшăннă, «Социаллă яваплă çемье» номинацире пĕрремĕш вырăна тухнă.

Шуркассинчи Галина Герасимова ывăлĕсене çитĕнтернĕ хыççăн Ксюшăпа Настьăна хăй хÿттине илнĕ. Настя халĕ Шупашкарти аслă шкулта пĕлÿ илет. Хăйне пăхса ÿстернĕшĕн, тĕрлĕ ĕçе вĕрентнĕшĕн амăшне тав тăвать. Настя, ашшĕ-амăшĕн хÿтлĕхĕсĕр çитĕннĕскер, 2012 çулта тĕп хулара хăтлă хваттере тивĕçнĕ.

Надежда Чернова кил-йышра арçын ачасем çеç пулнăран хĕр ача усрава илме шут тытнă. Оля ун чухне тăваттăра пулнă. Каярахпа çемьене унăн шăллĕпе йăмăкĕ – Кирилпа Юля – хушăннă. Ольăпа Юля халĕ Тенейри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкула çÿреççĕ.

Пĕр тăван Алевтинăпа Светлана Куракăш ялĕнчи Григорьевсен çемйине лекнĕшĕн хăйсен шăпине тав тăваççĕ. Ольга Геннадьевнăпа Аркадий Александрович вĕсене 2011 çулта Улатăрти ача çуртĕнчен илсе килнĕ. Светлана халĕ Элĕкри ача садне çÿрет, Алевтина – шкула. Пĕчĕк пулсан та ашшĕ-амăшне пулăшма тăрăшаççĕ хĕр пĕрчисем.

Корниловсем вара ача усрава илесси çинчен нихăçан та шухăшламан. Анчах та пурнăç сасартăк улшăннă. Вера Геннадьевна хĕр ача пирки ĕмĕтленнĕ. Çавна май вăл Шупашкарти ача çуртне çитнĕ. Унта улттăри Настьăпа тĕл пулнă. Пĕрре курсах килĕштернĕ ăна. Унтанпа çичĕ çул иртнĕ. Халĕ Настя Корниловсен юратнă тĕпренчĕкĕ.

Çемьери пур телее те асăнаймăн. Ача усрава илнĕ ашшĕ-амăшĕ каланă тăрăх – малтан вĕсемпе çăмăл пулман. Мĕншĕн тесен ачасем чи ансат ĕçе те пурнăçлайман. Халĕ вара вĕсемшĕн çемье – чăн-чăн телей. Хăйсене усрава илнĕ ашшĕ-амăшне юратаççĕ, хисеплеççĕ, кил-çурт вучахĕн ăшшине туяççĕ.

## Усăллă канашсем

• Çăмран çыхнă япалана çунă чухне шыва кăштах апат соди ямалла. Вăл япала тĕсне лайăхлатать, тар шăршине пĕтерет. Хĕллехи япалана çемçетес тесен чÿхенĕ чухне пĕр чей кашăкĕ глицерин хушмалла.

• Пурçăн пусма çинче утюг йĕрĕ юлсан ăна йĕпетнĕ апат содипе сăтăрмалла, типсен щеткăпа тасатмалла, япалана сивĕ шывра чÿхемелле.

• Шифонран çĕленĕ япалана икĕ апат кашăкĕ сахăр хушнă сивĕ шывра чÿхемелле.

• Çăмран çыхнă япала тĕсĕ тухасран çăвас умĕн ăна кăшт уксус хушнă шывра тытмалла. Чÿхекен шыва глицерин ( вунă литр шыва пĕр апат кашăкĕ) хушмалла.

## Сăнавсем

Киле ют кушак килсе ерсен пурнăç ăнать теççĕ.
Кушак килтен кайни – кил-çурт саланасса.
Кушак вилес умĕн килтен тухса каять теççĕ.
Кушак вун икке çитсен çын пуfive имĕш.
Кушак хăш еннелле пăхса питне çăвать, çав енчен хăна килет теççĕ.
Кушак нумайланни – пуясса.
Кушак çĕре выртсан – çанталăк ăшăтасса.
Кушак çинче виçĕ тĕс пулмалла.




Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.

# «Манра асатте юнĕ чупать»

**Пултаруллă çынсем ялта пурах. Вĕсен вăй-хăвачĕ çăл куç пек тапса тăрать. Çав хастарсем тăван тăрăха пĕтме парас мар тесе чылай ĕçлеççĕ. Акă Элĕк районĕнчи Тури Хурасанти Надежда Афанасьевăнах илер. Çичĕ теçеткерен иртнĕ хĕрарăма çынран ытлашши мĕн кирлĕ-ши? Юрăхсăра тухнă клуба вăл хăй шучĕпе юсанă! Ял-йыш кунта халĕ тĕрлĕ уяв ирттерет.**

## Самана сăпкара сиктермен

Ку çуртра маларах аслашшĕн, Ефим Тимофеевăн, ампарĕ пулнă. Вăл ялта çил арманĕ тытнă. Унта ял-йыш та çăнăх авăртнă. Уншăн арман хуçине кашни çăнăх е укçа панă. Çавна май Тимофеевсене 1930 çулта «кулак» тесе айăпланă: хуçалăхне «раскулачить» тума, хăйсене ссылкăна яма йышăннă. Икĕ çуртран пĕринче – канцеляри, тепринче ферма тунă. Тырă ампарĕ клуб пулса тăнă. Кунтах кино кăтартнă, вулавăш уçнă, çамрăк мăшăрсене те çырăнтарнă.

Тимофеевсен çемйине вара пуйăспа Свердловск облаçĕнчи Анат Тагил хулине виçĕ çуллăха ăсатнă. Камсем-ха вĕсем, айăпсăр айăпланнисем? Кил хуçи Ефим (1875 çулта çуралнă), арăмĕ Ирина (1873), ывăлĕсем Димитрийпе (1909) Иван (1916) тата кинĕ Вера (1909). Хĕрне Пăраскине ссылкăна каяс умĕн яла качча панă. Ун чухне вăл 16 çул çеç тултарнă. Ашшĕ-амăшĕ ăна нуша кăтартас темен.

Ссылкăран таврăнсан та Тимофеевсем «кулак» ятран хăтăлайман. Ефим Тимофеевича Улатăр тĕрмине илсе кайнă. 1939 çулта ăна çак хуларах персе пăрахнă. Кĕçĕн ывăлĕ Иван Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуçне хунă. Димитрий те фронтра пулнă. Вăл çапăçăва 1941 çулхи утă уйăхĕнче тухса кайнă. Яппун вăрçине те хутшăннă, çартан 1946 çулта çеç таврăннă.

Надежда Димитриевнăн ашшĕпе амăшĕ хастар çынсем шутланнă: колхозра та, кил-тĕрĕшре те тăрăшса ĕçленĕ. Ахальтен мар вĕсем ссылкăран таврăннă хыççăн кунне-çĕрне пĕлмесĕр вăй хунă, пĕчĕк çеç çурт çĕклеме мехел çитернĕ.

Ефимовсем утмăлмĕш çулсенче ялта чи капмар çурт хăпартнă. Пуринчен малтан телевизор туяннă. Ĕçченлĕхе пула каллех лайăх пурăнма тытăннă. Ахальтен мар Вера Титовна чи малтан «Хисеплĕ колхозница» ята тивĕçнĕ. Димитрий Ефимовича та пуçлăхсем асăрханă: вăл пĕр вăхăт колхоз председателĕнче, ферма заведующийĕнче вăй хунă. Тимофеевсем ачисене те пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарнă. Ашшĕпе пĕрле Надя ачаранпах лашасем пăхнă. 4-мĕш класс хыççăн сысна ферминче ĕçленĕ, кайран ĕне сунă.


Н.Д. Афанасьева Улашкипе

## Улашка – чăн-чăн тус

Мĕн хистенĕ-ха ăна клуба юсама? «Эпĕ ун пирки тахçанах шухăшланă, – терĕ Надежда Димитриевна. – Юхăнса ларнăран чун ырататчĕ. Маччи йăтăнса анчĕ, алăкĕсем çĕрĕшрĕç, урайне хăйпăтса кайрĕç. Кино кăтартакан будкăна выльăх-чĕрлĕх кĕрсе çӳретчĕ. Унтан-кунтан саплакалаттăмăр, анчах усси çукпа пĕрех. Асатте-асаннерен, атте-аннерен юлнă хуралтă маншăн çав тери хаклă. Вĕсен ырă ячĕ халăхра пурăнать. Манăн та пурнăçра çакнашкал йĕр хăварас килет. Эпĕ ăна хама валли мар, халăх валли юсаттарнă».

Кивĕ çурта «сиплеме» кинемей тăвата тĕрлĕ кредит (200 пин ытла) илнĕ. Ку та çитменрен ĕнипе пăрушне сутма тивнĕ. «Эпĕ хальччен ĕне выльăхсăр пурăнман, – малалла сӳтĕлет сăмах çăмхи. – Çынсем ирпе кĕтӳ хăваланине курсан татăлса йĕреттĕм. Çу каçипе канăç тупаймарăм. Çĕнĕ çул умĕн ĕнепе пăрушка туянтăмах. Каллех кредит илме тиврĕ. Каярахпа сурăхлă та пултăм».

Улашкапа (ĕнине çапла чĕнет) калаçса чунне йăпатать халĕ. Ку тăрăхра сĕте «Новый путь» хуçалăх пуçтарать: пĕр литрĕ 21 тенкĕ. Ял-йыша кашни вунă кунра укçа парать. Выльăх тытакансене икĕ тĕркем улăмпа, тырăпа тивĕçтерет.

Кредит тӳлеме халĕ Улашка та пулăшать. Ара, уйăхсерен патшалăха пилĕк пин тенкĕ памаллаçке, электроçутăшăн та тӳлемелле: клуб хальлĕхе ун вăйĕпе хутăнать. Кунсерен икĕ электрокăмака çунать унта. Çавна май тӳлев те самаях. 10 пин тенкĕ пенсипе пурăнакан кинемейшĕн çакă сисĕмлĕ. Унсăр пуçне кил-çурта та пăхса тăмалла, унтан-кунтан тӳрлетмелли тупăнсах пырать. «Манăн халех вилмелле мар, кредитпа татăлмалла», – тет кинемей шухăшлăн.

Шел, клуб çурчĕн хальлĕхе хуçи çук. Ăна никам та хăйĕн балансĕ çине илессишĕн çунмасть: ял тăрăхĕ те, район администрацийĕ те. Çакăншăн чунĕ ыратать ватă çыннăн. «Документсене йĕркелесе çитерме укçа çитĕ-ши? Хам çинех куçармалла пулĕ. Платниксем тытса ĕçлеттертĕм, вĕсене апат çитертĕм», – пăшăрханать ватă.

Клуба кĕрсе тухмасăр чăтаймарăм. Унăн ăш-чиккине юсаса çĕнетмех 30 пин тенкĕ расхутланă Надежда Димитриевна. Урайне линолеум сарнă, стенасене евроматериалпа хитрелетнĕ. Вăрăм саксем çинче – тĕрленĕ çи витти. Кунтах кĕнеке, хаçат-журнал пур. Сцена та илемлĕ. Çи-пуç улăштармалли пӳлĕм те пысăк.

«Маларах кӳршĕри Шĕмшеш çамрăкĕсем те килчĕç, – сăмах ваклать кинемей. – Вĕсен те клубĕ йăтăнса анать-çке. Музыка центрне ӳкерсе çĕмĕрнĕ хыççăн кĕртместĕп çамрăксене».

Вăл хăех клуб пуçлăхĕ те, тирпейлӳçĕ те, илемлĕх ертӳçи те. Ял-йышпа концерта хатĕрленеççĕ вĕсем. Ун валли купăс та тупнă.

## Ĕмĕтсем, шухăшсем..

Валентина Димитриевна мăшăрĕпе пĕрле виçĕ ача çитĕнтернĕ. Икĕ хĕрĕ, Эвелинăпа Валентина, аслă пĕлӳ илнĕ. Ывăлĕ Андрей Афганистанра хĕсметре тăнă. Тĕпренчĕкĕсем паянхи кун пурте ĕçлĕ, çемьеллĕ. Шел, упăшки вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

– Çак паттăрла ĕçе пурнăçлама ачăрсем хирĕç пулмарĕç-и? – ыйтрăм кăсăкланса.

– Пĕри те усал каламарĕ. Ывăл та ман шухăшпа килĕшрĕ, – пулчĕ хурав.

Тури Хурасанра 71 кил. Хальхи вăхăтра çуррине çеç çын пурăнать. Çулла вара чылайăшĕ хуларан яла куçать. Ял урамĕ те ача-пăчапа тулать. Лавкка çукки çеç ял-йыша самай чăрмав кӳрет. Малашне ăна тума палăртаççĕ. Çавăн пекех ял çынни кĕпер хывасшăн. Чăваш Сурăмне çити автобус çӳреттересшĕн. Совет саманинче асăннă яла кунне тăваттă хутланă вăл. Ку ыйтусем Надежда Афанасьевăна та кăсăклантараççĕ. Унсăр пуçне вăл аслашшĕ-асламăшĕн çырмари çăлĕсене тасатма шухăшлать.

Аслашшĕн çил арманне вăхăтра юсаса çĕнетейменшĕн пăшăрханать. Унран палăк музей уçма ĕмĕтленнĕ. Кунтах кафе йĕркелеме палăртнă. Шел, район ертӳçисем те, ырăнти тӳресем те ырă шухăша пурнăça кĕртме мехел çитереймен. Аваллăх палăкĕ хуçасăр темиçе çул юхăнса ларнă. Халĕ вăл текех çук.

Тепĕр пысăк ĕç вăл – клуб çуртне пысăклатасси.

– Каллех кредитпа-и? – тĕлĕнсе ыйтрăм ватăран.

– Çук, ку хутĕнче унсăрах майлаштарăпăр, – терĕ Ленин орденне тивĕçнĕ хĕрарăм. – Манăн строительматериалсем пур.

73 çулти ватăран тĕлĕнме пăрахаймастăп. Тепри пулсан ашшĕ-амăшĕн кил-çуртне те юсама васкамасть. Юхăннăскере пăта та çапмасть. Надежда Димитриевна вара ишĕлнĕскере ял халăхĕ валли çĕнетнĕ. Унра ыр кăмăллăх та, тăванлăх туйăмĕ те пысăк.


Асăнмалăх, савăнмалăх



# Ял-йыш савăнăçĕ

Етĕрне районĕнчи Лапракасси ялĕнче çак кунсенче пысăк уяв иртнĕ: тĕплĕ юсав хыççăн ырăнти культурăпа кану центрне уçнă. Халĕ кунта типтерлĕ, ăшă. Курав залне, сценăна, ытти пӳлĕме çĕнетнĕ. Унсăр пуçне республика бюджетĕнчен уйăрнă укçа-тенкĕпе кĕвĕ-çемĕ, сасă, çутă хатĕр-хĕтĕрĕ, компьютер техники, сцена валли декораци, тумтир (18 комплект) туяннă.

Куракана «Вирьял», «Латус», «Хунав», «Хавал», «Шанчăк», «Салам» ансамбльсем уяв ячĕпе саламланă. Концерт программине Лапракассисем Культура çулталăкне тата район шайĕпе иртекен «Сан çинчен юрлатпăр, савнă тăван ен» фестивале халалланă.

Çакнашкал культурăпа кану центрĕ республикăра – 700. Кашни çулах федераци тата республика бюджетĕнчен уйăракан укçа-тенкĕпе вăтăра яхăн клуба «сиплесе сыватаççĕ». Ял клубĕсене тĕпрен юсасси çинчен калакан патшалăх программи кăçал та вăйрах.

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

Çĕр-шывра, тĕнчере...

# Ютти хамăрăнне хĕсет

**Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕренпе çулталăк иртрĕ. Мĕнлерех пĕтĕмлетӳ тума пулать-ха? Вулакансене АГРОРУ.ком суту-илӳ тытăмĕн аналитика уйрăмĕн эксперчĕсем хатĕрленĕ хăш-пĕр тĕслĕхпе паллаштаратпăр.**

Раççей статистики ял хуçалăх таварне ют çĕр-шыва сутасси ним чухлĕ те ӳсменнине палăртать. Пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çул кăтартăвĕсем тăрăх – апат-çимĕç таварĕпе ял хуçалăх чĕр таварĕ юта ăсатасси 19,3 процент чакнă – 6,35 млрд доллартан 5,13 млрд доллар таран. Çав вăхăтрах ютран апат-çимĕç кӳрсе килесси 5,9 процент ӳснĕ – 15,8 млрд доллартан 16,8 млрд доллар таран. Паллах, Раççей çыннисем нумайрах çиме пуçланипе çыхăнман ку. Ютти хамăрăнне хĕсни кăна. Сĕт турттарасси 7,6 процент хăпарчĕ (çак шутран типĕ сĕтпе хăйма – 41,2 процент), çĕр улми – 3,9, помидор – 4,6, банан – 8,7, цитрус çимĕçĕ – 8,8, пан улми – 14,4, кофе – 23,9, макарон – 18,3 процент.

Раççей ют çĕр-шыв кусĕнчен палăрмаллах сисĕнет. Иртнĕ çулхи кăрлач–çу уйăхĕсенче юта тавар турттарсси 4,8 процент чакнă, унтан кӳрсе килесси вара 4,6 процент ӳснĕ.

Пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çулта ял хуçалăх организацийĕсен пĕтĕмĕшле тупăшĕ 21,8 процент (46,4 млрд тенкĕ таран) чакнă. Тăкак виçи 2,1 хут ӳссе 24,4 млрд тенке çитнĕ. Çавна май ял хуçалăх отраслĕнче тăкаклă ĕçлекен предприятисен йышĕ 23,6 процентран 26,7 процента çитнĕ. Апла пулсан Раççейри кашни тăваттăмĕш ял хуçалăх предприятийĕ хăйшĕн те тăкаклă ĕçлет. Ĕç-пуç малалла та çаплах кайсан, рынок тытăмĕнче улшăну пулмасан çак предприятисенчен ытларахăшĕ 2-3 çул хушшинче панкрута тухма пултарать.

### Хаксем сиккелеççĕ

Раççей статистикин кăтартăвĕсем тăрăх – иртнĕ çулхи кăрлач–утă уйăхĕсенче потребитель хакĕсен индексĕ 7,1 процентпа танлашнă пулсан апат-çимĕç 8,3 процент хакланнă: макарон – 12 процент, тип çу – 7,8, улма-çырлапа пахча çимĕçĕ – 12,8, çăкăр-булка – 15,7 процент.

Ял хуçалăхĕ чăннипех те аталанса пырсан апат-çимĕç хакĕсем çакнашкал сикес çук. Сахал тупăшлă çемьесен ĕç укçин çурри шăпах питĕ хăвăрт хакланакан, çав вăхăтрах пахалăхĕ чакса пыракан апат-çимĕç туянма каять.

Федерацин антимонополи службин органĕсем ăçталла пăхаççĕ-ши? Монополистсем каварлашса хака хăпартнине, суту-илӳ тытăмĕсемпе тавара курттăммăн туянакансем хаксемпе выляннине вĕсен чармалла мар-и-ха?

Раççей ĕмĕртен-ĕмĕре вăйлă аталаннă ял хуçалăхĕпе, хăйне хăй тăрантарнипе палăрса тăнă, анчах халĕ эпир халсăрланса çитнĕ «банан республики» пек курăнатпăр.

Çур çул хушшинче сысна ашĕ 120 тенкĕрен 70 тенкĕ таран йӳнелнипе сысна фермисен тупăшĕ калама çук хăвăрт чакса ларчĕ.

**Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацийĕ вăл – пĕр-пĕрне курса чĕререн савăнса, йăл кулса калаçакансен клубĕ мар, вăл – акулăсем ишсе çӳрекен тинĕс. Ыттисемпе тупăшаймасан унта кĕме те кирлĕ мар. Урана йĕпетмелле те пулманнине туйса илтĕмĕр ĕнтĕ. Раççейри аш-какай туса илекенсен пĕрлĕхĕ сысна ĕрчетекенсен отраслĕ 50 млрд тенкĕ таран тăкак курасса систерет.**

Тырă рынокĕнчи лару-тăру та çивĕч. Тырра юта илсе тухма чарман пулсан тавар туса кăларакансем тупăш та илес çукчĕ. Çăмарта хакĕ калама çук хăпарсан çеç монополие хирĕçле служба тĕрĕслевсем ирттерме пуçларĕ. Шел те, кунашкал тĕслĕхсем çав тери нумай.

### Тĕрлĕ шухăшлăх

Раççей эксперчĕсем ял хуçалăхĕнчи лару-тăрăва тĕрлĕрен хаклаççĕ. Пĕрисен шухăшĕпе эпир пысăк синкер умĕнче, теприсемшĕн темех мар, экономика питĕ майĕпен аталанса пынипе япăх курăнатпăр иккен. Калăпăр, аш-какай туса илесси 11 уйăхра 5,1 процент ӳснĕ. Анчах çав вăхăтрах сăвăм палăрмаллах чакса пырать.

– Иртнĕ çулăн пĕрремĕш çуррине выльăх апачлĕх тырă умĕнхи çултинчен икĕ-виçĕ хут хаклăрах пулчĕ. Çавна май продукци хăй хаклăхĕ калама çук ӳссе кайрĕ, укçа хĕсĕнчĕ. Предприятисемшĕн кредита епле саплаштарас ыйту тухса тăчĕ, – тет Агрифуд Стретеджис компанин президенчĕ, чăх-чĕп ĕрчетессипе ĕçлекен программăна ертсе пыракан Альберт Давлеев. – Инвестици кредичĕшĕн субсиди тӳлесси, хакланнă выльăх апачĕшĕн компенсаци парасси тытăса тăни те лару-тăрăва çивĕчлетрĕ. Çавăнпах ĕнтĕ бройлер производствин тупăшĕ 5-6 процент чакрĕ, çăмартан – 2-3 процент. Чăх-чĕп какайĕ тата çăмарта туса илекен вунă предприяти панкрута тухрĕ.

Агропромышленнăç комплексĕнче кашни çулах мĕнле те пулин отрасль «çунать» – е çут çанталăкри пăтăрмахă пула, е рынокри катаклизмпа, е иккĕшĕ те пĕр харăс килсе тухнипе. Çулсеренех патшалăх пулăшăвĕ кая юлса çитет.

# Китайсем нумай пурăнаççĕ

**«Эпир пĕр вырăнта лармастпăр, тăтăшах утатпăр, тĕрлĕ хускану тăватпăр», – теççĕ Китай пенсионерĕсем.**

**Унта пенсие тухнă хыççăн телевизор умĕнче ларакан çук: карчăк-кĕрчĕк спортпа туслă, тĕл пулусене çӳрет. 100 çула çитнисен йышĕпе Китай тĕнчере иккĕмĕш вырăн йышăнать.**

78 çулти Чжу Гоу пенсионер кашни каç урама ташлама тухать. Тивĕçлĕ канăва тухнисем валли пур хулара та ятарлă вырăнсем уйăрнă. Паллах, пурте чаплă ташлаймаççĕ, кам мĕнле пултарать. «Ал-урара юн çӳреме ан пăрахтăр тетпĕр-çке, – ăнлантарать Чжу Гоу. – Ватă çыннăн хускалмалла. Асанне калашле: выртсан – тăраймăн».

Китайра аслă ăру çыннисене хисеплеççĕ. Мĕн пур паркра пенсионерсен шăмшакне çемçетмелли вырăн йĕркеленĕ. Çĕрçĕр ватă турник çинче туртăнать, гантель çĕклет, сывлав çулĕсене çирĕплетмелли хускану тăвать.

Хальхи вăхăтра китайсем вăтамран 75 çул пурăнаççĕ. 2030 çул тĕлне çак кăтарту сакăр вунна çитмелле. Çĕр çултан каçнисем халех 50 пин ытла. Çав вăхăтрах ватăсем сăра та ĕçеççĕ, çуллă аш-какай та тиркемеççĕ, пĕр сăмахпа каласан – тухтăрсен чарăвне пăхăнмаççĕ. Апла мĕншĕн-ха вĕсем нумай пурăнаççĕ?



### Курса çӳреççĕ, юратаççĕ, ĕçлеççĕ

– Пирĕн пенсионерсем питĕ чĕрĕ, – тет Хэй Лун профессор. – Нумайăшĕ тĕнче курса çӳрет. Пĕччен пурăнакансем Интернет урлă мăшăр шыраççĕ. Пур ресторанта та çамрăксем пекех ыталашса ларакан ватăсене куратăн. Пенсие тухсан та хресчен çав-савах уй-хирте, пахчара тăрмашать. «Чупакан тигра чарма юрамасть, унсăрăн вилет»,– теççĕ вĕсем. Пенси укçи нумай мар. Ялсенче пурăнакансем 120 юань (600 тенкĕ) илеççĕ. Китай Халăх Республикин конституцийĕн 49-мĕш статйинче ачисен ашшĕ-амăшне пăхмаллине çырнă, саккунран пăрăнакансене суд тенкелĕ кĕтет. Китай старикĕсем пенсие тухсан çамрăк чухнехинчен те лайăхрах пурăнаççĕ-мĕн.

Тĕп апат – сысна ашĕ. Пĕверпе тата чĕре чирĕсемпе чирлекенсем сахал. Мĕншĕн тесен вĕсем пахча çимĕçне нумай çиеççĕ, апат-çимĕçе пăс çинче хатĕрлеççĕ, çавна май усăллă веществосем пĕтĕмпех сыхланса юлаççĕ. Сысна ашне яланах салатпа пĕрле çиеççĕ. Кулленхи рационра рис, куккурус, нимĕç пăрçи, улма-çырла чылай. Пасарта чĕрĕ пулăпа креветка çеç сутаççĕ, чĕрĕ марри вĕсемшĕн – вилнĕ. Апата нихăçан та темиçе кунлăх хатĕрлемеççĕ, ĕнерхине ăшăтса çиесси те, тăраниччен кӳпсе лартасси те йăлара мар. Çавăнпах-тăр пенсионерсен хушшинче самăрри сайра -хутра çеç тĕл пулать.

### Хирург аллине лекесшĕн мар

Медицина тӳлевлĕ пулни те нумай пурăнма хистет. Васкавлă пулăшу машинине чĕнсе илесси укçаллă. 5 минут пăхнăшăн тухтăра 100 юань (520 тенкĕ) кăларса памалла. Чирлĕ çын госпитале пырсан унран чи малтанах укçа ыйтаççĕ. Чухăнсем валли тӳлевсĕр клиника сахал, унта лекме пĕр уйăх малтан çырăнмалла. Китай çынни чирлесен сиплĕ курăкпа тĕрлĕ тымар, типĕтнĕ шапа илсе эликсир вĕретет. Шăнса пăсăлнинчен никам та эмел таврашĕпе сипленмест. Операци тутарма тивсен вара мĕн пур тăван укçа пухать. «Хирург аллине лекес марччĕ тесе пурăн!» калараăша тĕпе хураççĕ.

Чир-чĕр таврашĕ 40 çултан пуçласа 60 çула çитиччен çулăхать тесе шухăшлаççĕ китайсем. Çавăнпа шăпах çак тапхăрта тĕрĕс пурăнма тăрăшаççĕ: шыв ытларах ĕçеççĕ, тăварлă çимеççĕ, улма-çырлапа, пахча çимĕçне май пур таран нумайрах усă кураççĕ. Пурнăç йĕрки те пĕлтерĕшлĕ – 8 сехетрен кая мар çывăрмалла.

Чи кирли – хăвна тытма пĕлни. Чунран кулянасси е тарăхасси китайсемшĕн ют. «Арăм вăрçать пулсан урăх пӳлĕме кайса телей паллине ӳкеретĕп, – тет Чжу Гоу пенсионер. – Ĕмĕр ахаль те питĕ кĕске, çилленсе, тарăхса пурăнсан вăл пушшех кĕскелĕ». Китай çĕр-шывĕ хăйĕн çыннисем çĕр çинче чылайрах та телейлĕрех пурăнччăр тесе тăрăшать. Çаплла пулса пырать те.

**Кăларăма Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, нарăс уйăхĕн 17-мĕшĕ**

18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.15 «ВТОРОЙ РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ТУРНИР ПАМЯТИ Н. ПОРУЧИКОВА». СПЕЦИАЛЬНЫЙ РЕПОРТАЖ (6+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)

**Ытлари кун, нарăс уйăхĕн 18-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)

**Юн кун, нарăс уйăхĕн 19-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (6+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кĕçнерни кун, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА. ПРЕДСЕДАТЕЛЬ КАБИНЕТА МИНИСТРОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ И.Б. МОТОРИН» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА. ПРЕДСЕДАТЕЛЬ КАБИНЕТА МИНИСТРОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ И.Б. МОТОРИН» (12+)

**Эрне кун, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НАОБУМ» (6+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «НАОБУМ» (6+)

**Шăмат кун, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ**

6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
9.00 «К.В. ИВАНОВ ЯЧĔЛЛĔ ЧĂВАШ ПАТШАЛĂХ АКАДЕМИ ДРАМА ТЕАТРĔ 95 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ЯТПА ХАТĔРЛЕНĔ УЯВ КАÇĔ» (6+)
11.30 «АКИЛБУПСЕР» (0+)
15.00 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
15.30 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
16.00 «АМА КАЙĂК ÇУЛĔПЕ». ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔН СПЕКТАКЛĔ (6+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА. ПРЕДСЕДАТЕЛЬ КАБИНЕТА МИНИСТРОВ ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ И.Б. МОТОРИН» (12+)
18.00 «РЫКАКАССИ». ИЛЕМЛĔ ТЕЛЕФИЛЬМ (12+)
19.00 «ЧУН ТУСЛĂХĔ». Г. АЙХИ ПИРКИ ЙĂМĂКĔН АСА ИЛĔВĔСЕМ (6+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР» (12+)

**Вырсарни кун, нарăс уйăхĕн 23-мĕшĕ**

9.00 «ЧЕСТЬ ВЫШЕ ЖИЗНИ» (6+)
9.15 «ВАСИЛИЙ РАЙМОВ АННЕНЕ ХАЛАЛЛАСА КОНЦЕРТ» (6+)
17.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (6+)
17.30 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
18.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
18.30 «АВАН-И» (12+)
19.00 «ТОРЖЕСТВЕННОЕ СОБРАНИЕ, ПОСВЯЩЕННОЕ ДНЮ ЗАЩИТНИКА ОТЕЧЕСТВА» (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Нарăс, 12 – юн кун | Нарăс, 13 – кĕçнерни кун | Нарăс, 14 – эрне кун | Нарăс, 15 – шăмат кун | Нарăс, 16 – вырсарни кун | Нарăс, 17 – тунти кун | Нарăс, 18 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.23 | 8.21 | 8.19 | 8.17 | 8.14 | 8.12 | 8.10 |
| | анать | 17.47 | 17.50 | 17.52 | 17.54 | 17.56 | 17.58 | 18.00 |
| Кун тăршшĕ | | 9.24 | 9.29 | 9.33 | 9.37 | 9.42 | 9.46 | 9.50 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (3.52) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 13-мĕш кун | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун |
| | | Ту качаки паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче |

## ВУЛАВĂШ

Лев КАДКИН

# Хĕрлемес

Калав

Хула çынни пулсан та – çу кунĕсене эпир кил-йышпа ялта ирттерме тăрăшатпăр. Кунти шыва мĕн çиттĕр! Ăна пăраласа чавнă тарăн çăлран уçласа кăларатпăр. Усăллăрах та, тутлăрах та ахаль пусăрипе танлаштарсан.

Хĕвел ансан Хĕветĕр тенешкел, кас пулттипе шыва кайса килес терĕм хайхи. Таврана кас ĕнтрĕкĕ хупланă. Çапах çу кунĕнче хăвăрт тĕттĕмленмест. Утатăп ял хĕррипе васкамасăр. Кунта хыр нумай ÿсет. Тен, çавăнпах, урамринчен кăшт тĕттĕмрех пек туйăнать.

Тăкăрлăкран сурăх ушкăнĕ сиксе тухрĕ те çавăнтах хапха патне вĕштĕртеттерчĕ. Ытла çăмăл выльăх çав, нимĕн калаймăн. Куç хупса иличчен таçта çухалчĕ. Кил хуçи хĕрăмĕ калиткене яри уçса хунă та картишне кĕнĕ иккен вĕсем. Кунтах, çитменнине, вĕшле йытă чупкаласа çÿрет. Сурăхсене çавă хÿтĕрленĕ. Вăл кĕçех хÿрине вĕлтĕртеттерсе хуçи хыççăнах кĕрсе çухалчĕ. Епле йытă тивĕçне ăста пурнăçланă вăл. Маттур! Манăн та, апла тăк, тĕттĕмленсе çитиччен кайса çаврăнас шухăшланă çĕре.

Утнă майăнах савăта хулран вĕçертетĕп. Хатĕр пулас тетĕп шыв ăсма. Унччен те пулмарĕ, чăн-чăн сунарçă тейĕн, тупата, чупкаласа-сиккелесе пыракан кушак аçине курах кайрăм. Каять-каять те чарăнса тăрать, темĕн пит сăнаса пăхать. Эпĕ, утма чарăнсах, çакскере сăнатăп. Хыр йывăççĕ патнелле шăвăнать иккен хĕрлемес. Йывăç вулли çывăхĕнче, тавралла та, нимĕн асăрхасси пулмарĕ. Мĕн çуйхантарнă вара кушак аçине? Чим, хыр туратти çинче шăнкăрч вĕлли çакăнса тăратьмĕн, çывăхрах икĕ ула курак хумханса ларать. Нивушлĕ кушак аçи вĕсене тапăнасшăн? Эй-й, тусăм, ытлашши хапсăнмастăн-и? Анчах кушак аçи нимĕн те илтмест, нимĕн те курмасть ĕнтĕ. Пĕтĕмпех хăй ĕçне путнă. Ман çине те куç айĕн кăна пăхса иленçи пулчĕ. Малаллах утрĕ-шурĕ палăртнă енне. Ну, каппайчăк вара! Тупăннă сунарçă! Хăтлантăрах, ара. Шыв ăсас-ха ман.

Ĕнтĕ каялла килелле уттарам тенĕччĕ. Ĕлкĕреймерĕм. Тем хушăра пуç тăрринче тĕнче йăтăнса аннă пекех туйăнчĕ. Çав тери çывăхра ула курак мĕн пур вăйран кранклатса янипе шыва та тăкса ятăм. Кушак шăнкăрч вĕлли патне хăпарма пуçланă иккен, кайăксем ăна чарма хăтланаççĕ. Пĕри Хĕрлемесе çÿлтен тапăннă, тепри, турат çинчи, ниçта кайса кĕрейми кранклатать. Хăратас тет пулас. Кушакĕ аптра кайнă: малти ура лаппипе çапкалашать, çÿлтен тапăнаканнинчен хăтăлма тĕрмешет. Анчах ниепле хăпаймасть курак чĕрнинчен. Кай, пĕр тесен, выртасчĕ сан хуçа ури вĕçĕнче тутлăн мăрăлтатса. Çук вĕт, сунар асна килнĕ, çут çанталăк сисĕмĕ вăраннă.

Ула курак айван кайăк мар, хăйне хăй хÿтĕлеме пĕлет. Хÿтĕлеме кăна мар, хăйне кÿрентерекене тавăрма та ăста. Хĕрлемес патне вĕçсе пырать те хÿринчен таклаттарать хайхине çивĕч сăмсипе. Кушак аçи ним тума пĕлеймест. Тарса та каяймасть, йывăç тăрринелле те малалла хăпараймасть, аялалла та анаймасть. Кулса вилмелле, чăнах. Акă сана шăнкăрч йăви! Мĕн шыратăн унта, мĕскĕн?

Эпĕ çакскерсем патне çывăхарах пырса тăтăм. Тан мар кĕрешÿре кураксем вăйлăраххи пăхсах паллă. Хĕрлемесĕн парăнмалли кăна юлнă. Икĕ енĕ те мана, сăнаса тăраканскере, пăçăрах асăрхарĕç. Анчах хĕрсе кайнипе чарăнма пĕлеймерĕç. Пĕр куракĕ çав-çавах çÿлте явăнса хăратса тăрать, тепри вĕçсе пырса Хĕрлемесе таклаттарса илме ĕлкĕрет. Пултарать вĕт, шельмă. Лектерет-лектеретех шăнкăрч вăррине. Хÿресĕр тăрса юлма кăна мар, пуçна та çухатма пултарăн кунта. Анчах ниме пăхмасăр кушак аçи тивĕçлĕхне çухатмасть. Унра та усаллăхпа парăнманлăх çителĕклех. Ман çине пăхса илет те: "Тен, эсĕ пулăшăн мана?" – тенĕнех туйăнать.

Мĕн тума пĕлес? Хăв тухнă ухутана, хăвах вĕçне çитер. Шăнкăрч вĕллине аркатма чарăнăн вара.

Самантлăха икĕ енĕ те, çав-çавах пĕр-пĕрне парăнмасăр, шăп тăчĕ. Курак лăпланнă. Тепĕр йывăç çине вĕçсе ларĕ-и? Хĕрлемес те хыр çинче çĕр каçмĕ ĕнтĕ. Кулăш вĕçленчĕ, киле кайма вăхăт. Анчах аякка кайма ĕлкĕреймерĕм: кĕрешÿ çĕнĕрен пуçланчĕ. Сăнарах пăхатăп та куратăп: Хĕрлемес малаллах шума пуçланă, пĕр-ик утас турĕ пулас-ха. Анчах унччен те пулмарĕ, ула курак кун çине сиксе те ларчĕ. Эй-й, тамаша, пуçланса кайрĕ каллех. Çинçе турат тăрăх шунă-утнă май кушак аçи хÿрипе пăлтăртаттарать. Ула курака вара çакă кăна кирлĕ. Самантрах çывхарать те лешне таклаттарса та илет. Кушак пысăк йывăрлăхра халь-халь парăнасла курăнать пулин те, хăйне çирĕп тытать. Хÿререн таклаттарнине пăхмасăрах турат тăрăх çÿлелле çĕкленчĕ вĕт, апăрша. Çакна кĕтмен ула курак çухалса кайрĕ. Хĕрлемес вара тата та тĕлĕнтерчĕ. Пакша евĕр ялт сикрĕ аяларахри турат çине. Ÿкмерĕ, çапăнмарĕ. Йĕри-тавра сăнаса пăхса çаврăнчĕ, канса илчĕ, вара çÿлевĕç пек аялалла вирхĕнчĕ.

Çапла, иккĕшĕ те паттăрлăх кăтартрĕç темелле. Парăнмарĕç пĕрпĕрне. Пĕри чăнласах хăратма пултарчĕ, шăнкăрч йăвине аркаттармарĕ, упраса хăварчĕ теес пулать. Тепри хăравçăланса намăса юлмарĕ, хăйне танлăн тытса йывăç çинчен анчĕ.

Хырлăхри путиш кунпах вĕçленмерĕ-ха. Ула курак çухатупа ниепле килĕшме пултараймарĕ курăнать. Ăнланса юлма та май килмерĕ, икĕ кайăкран тахăшĕ çĕмрен пек вĕçсе анчĕ те кушак аçине çурăмĕнчен таклаттарса илчĕ. "Ÿлĕмрен йăва патне ан çывхар!" – терĕ пулинех. Хĕрлемес ыратнине чăтаймасăр хыттăн мяуклатса ячĕ.

Кĕрмешÿ вăхăтĕнче вăхăт самаях малалла шурĕ. Тавралăх кăвакарчĕ, тĕттĕмленсе пычĕ. Хĕрлемесĕн хĕрлĕ тĕсĕ шупкалчĕ, тĕксĕмленчĕ. Тĕллевĕ патне çитеймерĕ пулин те, чыслăн тухрĕ вăл кĕрешÿрен. Тытăçу çĕр çинче пулса иртес тĕк, кăтартĕччĕ теха çунатлисене. Çÿлте вара ... çÿлте хуçаланаймасть çав вăл.

Кушак аçи ялалла лăпăстатрĕ.

Ула кураксем вара çĕнтерÿшĕн пит хĕпĕртерĕç. Тăшманĕ пăрахса кайнине курусăн хаваслăн кранклатрĕç, шавлăн çунаттисемпе лапăстаттарчĕç. Юнашар ларса тем калаçрĕç хăйсен чĕлхипе, тем ăнлантарчĕç пĕр-пĕрне. Манăн вĕсен калаçăвне итлесе пĕтерме вăхăт пĕртте юлмарĕ. Килтисем çухатĕç те, тепĕр тамаша сиксе тухĕ тата. Акă, инçех те мар тахăшсен хапхи уçăлса хупăнчĕ. Картишĕнче хурсем какăлтатса илчĕç те лăпланчĕç. Йытă хам-хам тукаларĕ. Вара пур çĕрте те шăп пулса тăчĕ.

## АН ТА КАЛА

### Çыру çырнă – хурав çук

Йĕпреçри Чернореченск урамĕпе машинăпа кăна мар, çуран та çÿреме хăрушă. Çурхи е кĕрхи çанталăкра пушшех нуша курать иртен-çÿрен.

Вырăнти влаç хута кĕрессе шанса çынсем йышпа çыру тĕрленĕ, ăна поселок администрацийĕн ертÿçи Вячеслав Анисимов патне çитернĕ. Иртнĕ çулхи чÿк уйăхĕнче пулнă ку. Виçĕ эрнерен çав çыру район администрацине килсе выртнă, анчах кун пирки халăха пĕлтермен.

Тĕрĕссипе, çакă çынсен çырăвĕсене пăхса тухмалли йĕркене пăснине пĕлтерет. Ĕç-пуç миравай судья патне çитнĕ, халăх ыйтăвне палăртнă вăхăтра пăхса тухманшăн поселок тата район ертÿçисене Вячеслав Анисимовпа Николай Чугарова 5 пин тенкĕлĕх штрафлама йышăннă.

### Тăлăх-турата кам хÿтĕлĕ?

Ашшĕ-амăшĕ пăхман е тăлăх ачасен шăпи тухмахлă. Патшалăх вĕсен нушине çăмăллатассишĕн укçа чылай уйăрать пулин те вырăнти влаç питех тимлемест. Асăннă çитменлĕхсене Çĕрпÿ районĕнче тупса палăртнă.

Район администрацийĕ тăлăх ачасем валли хваттер туянма «СПМК-8» юлташлăхпа килĕшÿ тунă. Çĕрпÿри Суворов тата Димитриев урамĕсенче çĕнĕ çуртсем хута яма сăмах панă строительсем. Калас пулать, ку организаци районта нумай çуртйĕр çĕкленĕ, пахалăхĕ начар мар. Килĕшÿ тăрăх – 2013 çул вĕçлениччен тăлăх-турат çĕнĕ хваттере куçмаллаччĕ. Шаннă кайăк йăвара пулмарĕ. Уйăрнă укçапа мĕнле усă курнине вырăнти влаç кирлĕ пек тĕрĕслесе тăман, çавна пула строительсем те юлхавланнă-тăр. Халĕ вĕсенчен пени шыраса илес ыйтăва çĕклеççĕ.

### Янтти астарать

Тĕрмере ларса тухнă çын унта тавăрнатех тесе калани тĕрĕсех пулĕ. Акă Елчĕк районĕнчи 51 çулхи Юрий Кондратьев 2013 çулхи çурла уйăхĕнче кирпĕч шутласа тавраннă та темиçе уйăхран саваламан сак çине каллех ларнă. Ăс кĕмен курăнать.

Чÿк уйăхĕн 25-мĕшĕнче хĕрĕнкĕ арçын тимĕр татки çĕклесе апат-çимĕç лавккине пырса кĕнĕ.

– Мана ĕçмелли-çимелли тата туртмалли памасан çак тимĕр пăрăх пуçунтан лекет! – çухăрнă услап.

Шÿтлемест апăрша. Ирĕксĕрех мĕн ыйтнине парса яратăн. Тĕлĕнмелле, çав арçын тепĕр кунне каллех асăннă лавккана çаратма пынă, кĕсье телефонĕ кирлĕ-мĕн. Хальхинче йĕрке хуралçисенчен тарса хăтăлайман.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

ОАО «ЧУВАШВТОРМЕТ»
ЗАКУПАЕМ ЛОМ ЦВЕТНЫХ И ЧЕРНЫХ МЕТАЛЛОВ ДОРОГО.
Лицензия № ЧР 21/01/03 от 31.08.2001.
г. Чебоксары, Гремячевский проезд, 5 а.
Тел.: (8352) 63-42-12, 63-51-84.

ПРОДАЮ
2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.
3. АКЦИЯ! Кольца колодезные диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.
33. Гравмассу, гравий, песок, щебень, керамзит. Доставка. Т. 89053465671.
45. Песок, гравмассу, щебень. Д-ка. Т. 89196543499.

88. Грабли от 23 тыс. руб., плуги, картофелесажалки, фрезы, косилки. Низкие цены. Все новое! Тел.: 8-927-851-68-58, 8-937-955-98-02.




«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 487 Тираж 4369

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем явапллă.